24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ЯНВАРЬ
16
ЭРНЕКУН
13(6038) №

# Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

## ФЗО ШКУЛĔСЕНЕ ВĔРЕНМЕ ИЛМЕЛЛИ ЧЕРЕТЛĔ ПРИЗЫВ

1941 çулти декабрь уйăхĕн вĕçĕнче ФЗО шкулĕсенчен вĕрентсе кăлармалли тĕрĕслÿсем вĕçленчĕç. СССР-ти ФЗО шкулĕсенчен тĕрлĕ профессипе ĕçлеме пултаракан квалификациллĕ рабочисем 200 пин çын вĕренсе тухрĕç. Пирĕн социализмлă промышленноçпа транспортри рабочисен çемьине çамрăк мастерсем хутшăнчĕç. Вĕсем, чи малтан, фронт валли ĕçлекен предприятисенче вырнаçĕç. Унта хастарлă ĕçлесе, çĕршывăн оборонине тĕреклетмешкĕн продукци ытларах туса кăларма пулăшĕç.

Чăваш республикинчи ФЗО шкулĕсенчен квалификациллĕ рабочисем — слесарьсем, столярсем, электромонтерсем, штукатурсем, платниксем пулса ĕçлеме 750 çамрăк вĕренсе тухрĕ. Нумайĕшĕ вĕсем фронт валли ĕçлекен предприятисене каяççĕ.

ФЗО шкулĕсенчен вĕренсе тухнă çамрăксем хăйсен профессине лайăх ăнланчĕç. Вĕреннĕ вăхăтра вĕсенчен чылайĕшĕ заводсенчи яланхи рабочисен кулленхи ĕç нормине тултарнă е ытлашшипех тултарнă. Куславккари ФЗО шкулĕнчи 6-мĕш группăра вĕреннĕ В. Александровпа Н. Данилов яланах нормăна ытлашшипех тултарса пынă, кунне 35-шер тенкĕлĕх ĕçленĕ. Сентябрь уйăхĕнче Н. Данилов 153 тенкĕ ĕçлесе илнĕ. Çав шкултах 2-мĕш группăра вĕренекенсем М. Ильинпа Г. Иванов хăшпĕр кунсенче 40-шер тенкĕлĕх ĕçлесе илнĕ. Август уйăхĕнче Н. Александров 200 тенкĕ, В. Айдаровпа Ф. Михайлов 143-шер тенкĕ ĕçлесе илнĕ. Вĕренсе тухнисенчен нумайĕшĕ квалификаци паракан тĕрĕслеве лайăх тытрĕç, пысăк разряд илме тивĕçлĕ пулчĕç. Куславккари ФЗО шкулĕнчи 212 вĕренекентен 164 ача тĕрĕслеве «хорошо» та «отлично» паллăсемпе тытрĕç.

Правительство решенийĕ тăрăх, 1942 çулти январĕн 15-мĕшпе февралĕн 1-мĕш хушшинче ФЗО шкулĕсене вĕренме илмелли черетлĕ призыв (мобилизаци) пулса иртет. Унта хулари, ялсенчи çамрăксене 16—17 çулти арçын ачасене, 16—18 çулти хĕрачасене илеççĕ.

Чăваш республикинчи ФЗО шкулĕсене мобилизаци йĕркипе тата харпăрхăй ирĕкĕпе 1.500 çын илмелле. Ачасене илсе çитернĕ хыççăн февралĕн 1-мĕшĕнчен занятисем пуçланаççĕ.

ФЗО шкулĕсене вĕренме илмелли черетлĕ призыва иртерес тĕлĕшпе ĕççынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсемпе Ĕç резервĕсен Управленийĕ умне питĕ пысăк та ответлă задачăсем тухса тăраççĕ. Райсоветсен тата Шупашкар хула Совечĕн исполкомĕсем призыва организованно тата вăхăтра туса иртерме тивĕçлĕ. ФЗО шкулĕсене çирĕп сывлăхлă, тĕреклĕ çамрăксене ямалла. Вĕсене тумтир, урана тăхăнмалли, улăштарса тăхăнмалăх икĕ мăшăр кĕпе-йĕм, çул çинче çимелĕх апат-çимĕç хатĕрлесе памалла. Ку япаласене колхоз çамрăкĕсем валли — колхозсем, хулари тата колхозра тăман çамрăксем валли — ашшĕ-амăшĕ, ачасен çурчĕсенчи воспитанниксем валли — Çутĕç халăх комиссариачĕн оргăнĕсем тупса пама тивĕçлĕ.

ФЗО шкулĕсене мобилизациленĕ çамрăксене вырăнтан организованно ăсатса ярса шкула лайăх çитерес ответлăха хĕллехи условисем ÿстереççĕ.

ФЗО шкулĕсенчи призыва организованно иртерес тĕлĕшпе ВЛКСМ райкомĕсемпе комсомолăн ялти организацийĕсен умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ. Вĕсен ФЗО шкулĕсем мĕнле вырăн йышăнса тăни тата камсене хатĕрлесе кăларни çинчен çамрăксене тĕплĕн ăнлантарса памалла. Çапла тусан çамрăксем ушкăнĕ-ушкăнĕпе пырса заявленисем парĕç. Комсомол райкомĕсен совет общественноçĕпе пĕрле ФЗО шкулĕсене яланах пулăшса пымалла. Вĕренекенсем валли общежитисем хатĕрлемелле, вĕсене организованно кĕтсе илмелле, килсе çитнĕ çамрăксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе çÿлти вырăна лартмалла. Малтанхи кунсенчех комсомолăн шкулти организацийĕсене йĕркелеме тытăнмалла.

Хальхи вăхăтра ФЗО шкулĕсенчи директорсене тата унти ответлă работниксене нумай ĕçлеме лекет. Вĕренме пуçличчен ачасем пурăнмалли çуртсене юсаса дезинфекци тумалла. Унтан шкула вĕренме килекен çамрăксене кĕтсе илессине йĕркелемелле.

Партипе совет тата комсомол организацийĕсем пурте çине тăрса ĕçлесен, ФЗО шкулĕсене вĕренме илмелли призыва организованно ирттерĕпĕр.

Тĕрлĕ профессисене вĕреннĕ çамрăк рабочисем отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче уйрăмах нумай кирлĕ. Çавăнпа та 4—5 уйăх хушшинче квалификациллĕ тата культурăллă рабочисем пулса тухакан çамрăксен призывне ăнăçлăн туса иртермелле, вĕсене вĕренме тивĕçлĕ условисем туса памалла.

## Совет Информаци Бюровĕнчен

### Январĕн 14-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Январĕн 14-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Хĕвеланăç еннелле малалла куçса пынă. Вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ хыççăн пирĕн чаçсем питех те нумай трофейăсем тытса илнĕ, халăх пурăнакан чылай пунктсене, вăл шутра Медынь хулине, йышăннă.

Январĕн 13-мĕшĕнче нимĕçсене 22 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 8 самолет пĕтнĕ.

* * *

Январĕн 14-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем тăшманăнне пехотăпа грузсем турттарса пыракан 130 автомашинăна ытла, боеприпассем тиенĕ 125 лава, 5 орудине прислугисемпе пĕрлех, бронемашинăна пĕтерсе тăкнă, чугунçул çинчи кĕпере, 13 вагонпа 3 паровоза взрыв туса сирпĕнтернĕ, чугунçул составне вут тивретнĕ, противникăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Шевцов юлташăн чаçĕ (Хĕвеланăç фрончĕ), противника хирĕç икĕ кун хушши çапăçса, нимĕçсене халăх пурăнакан 4 пунктран хăваласа кăларнă, тăшманăнне танкпа бронемашина, 2 оруди, 3 пулемет, миномет тытса илнĕ тата нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна вĕлерсе пĕтернĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче Селезнев юлташăн чаçĕ, малалла наступлени туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăннă тата тăшманăнне 10 автомашина, темиçе пулемет, 100 мина, 11 пин снаряд, нумай патронсем тытса илнĕ.

* * *

Пирĕн икĕ взвод (Ленинград фрончĕ) противникăн вăйлăлатнă роти çине кĕтмен çĕртен пырса тапăннă. Пуçланса кайнă тытăçура пирĕн боецсем тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 67 çынна вĕлерсе пĕтернĕ, 23 çынна амантнă тата темиçе çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Красноармеецсем-разведчиксем Бутыгинпа Баташев, Мельшино ялне пуринчен малтан çĕмĕрсе кĕрсе, пĕр ДЗОТ-а взрыв туса сирпĕнтернĕ те тăшманăн 8 салтакне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Германин 6-мĕш армийĕн командующийĕ генерал-фельдмаршал фон-Рейхенау партизансем гитлеровецсене питех те пысăк сиен кÿреççĕ тесе ирĕксĕрех йышăннă. «Партизансене хирĕç кĕрешесси çинчен» ятлă приказра, пирĕн войскăсем тытса илнĕскерĕнче, фон-Рейхенау çапла пĕлтернĕ: «Манăн штабри Зинц полковника тата тепĕр 2 инженера партизансем вĕлернĕ. Партизансен тепĕр группи 5 офицера вĕлернĕ. Партизансен «Смерть оккупантам» ятлă организацийĕн членĕсем пирĕн транспортсем çине темиçе хутчен пыра-пыра тапăннă», тенĕ.

* * *

Нимĕçсен вилнĕ обер-ефрейторĕ Русс çумĕнче вăл хăйĕн тăван çемьи патне Байль хулине ярса ĕлкĕреймен çырăва тупнă. Русс çапла çырнă пулнă: «Юлашки эрнесенче пулса иртнĕ событисене пула манăн сирĕн пата çыру çырма май килмерĕ. Эпĕ хамăн çумри япаласене пĕтĕмпех çухатса пĕтертĕм пулин те, халлĕхе хамăн ал-ура тĕрĕс-тĕкел юлнишĕн турра тав тăватăп. Эпĕ декабрь уйăхĕнче мĕн тÿссе ирттернипе танлаштарсан, халиччен тÿссе ирттерни нимĕн те мар. Декабрь уйăхĕнчи кунсем ман пурнăçри чи телейсĕр кунсем пулчĕç. Эпир шăнатпăр, питех те мĕскĕнĕн пурăнатпăр, çакăнпа пĕрлех тата пĕр канмасăр, пĕрех май çапăçура».

* * *

Снигири ялĕнче нимĕçсем асаплантарса вĕлернĕ Д. И. Хлыстов красноармеецăн ÿтне тупнă. Фашистсем унăн кăкăрĕ çинче çăлтăр касса кăларнă, куçне тата çамкине хĕртнĕ тимĕрпе сунтарса шăтарнă, аллисене пăрса мăкăлтаса пăрахнă.

* * *

Тула облаçĕнчи Белев районĕнчи Береговая ялĕнче, гитлерла захватчиксем чакса тухса кайнă хыççăн, нимĕçсем персе вĕлернĕ çынсен 11 виллине тупнă. Вилнисем хушшинче: Н. Т. Маркина, И. П. Милишин, А. Д. Шутов, Н. А. Шутов, И. В. Пузанов, М. И. Ларкина т. ыт. те. Хресченсенчен нумайĕшĕсем граната ванчăкĕсемпе аманнă, çав гранатăсене нимĕçсем подвалсене пытанса ларнă ял çыннисем çине пăрахнă пулнă. Çав ялтах оккупантсем аманнă 30 красноармееца чĕрĕллех çунтарса янă. Нимĕç мерзавецĕсен тискер кайăкла ĕçĕсем çинчен акт çырнă. Çав акт айне И. Е. Першин, А. Н. Ларкин, А. И. Ларкина хресченсем тата военнослужащисем—старший политрук Сясько, политрук Зайцев, красноармеец Финдровский юлташсем алă пуснă.

* * *

Матесалька хулинче (Венгрия) Венгри салтакĕсен батальонĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне ярассине хирĕç тăнă. Салтаксем казармăна кĕмелли алăксене баррикадăсем туса питĕрсе лартнă та хăйсем патне полк командирĕпе офицерсене кĕме паман. Çав батальона пусарса лартма пысăк çар чаçĕсем илсе пынă.

* * *

Хăйсен çĕршывне нимĕçсене сутнă Финлянди правительствĕсем халăхпа армие продовольстви тупса пама пултараймаççĕ. Финляндире хаяр выçлăх пуçланнă. Çусемпе аш-какая гитлеровецсене парса, Маннергеймпа Рюти телейсĕр финн халăхне белофиннсен войскисен пулман çĕнтерĕвĕсем çинчен калакан суя пĕлтерÿсемпе тăрантараççĕ. Çапла, сăмахран, январĕн 13-мĕшĕнчи сводкăра финсен командованийĕ çакăн пек пĕлтернĕ: «Свирь фронтĕнче пирĕн войскăсем нумай вăхăта пынă çапăçусем хыççăн паха позицие тытса илнĕ. Çав позицие неприятель вăйлăн хÿтĕлесе тăнă, çапах та çавăнти çапăçусенче советсен 2640 салтакне тыткăна илнĕ», —тенĕ.

Анчах çакă паллă: фронтăн Свирь участокĕнче юлашки вăхăтра активлă çапăçусем пулман. Çавăнпа та Финлянди войскисен командованийĕ çÿлте кăтартнă пĕлтерĕвĕсем малтан пуçласа вĕçне çитиччен суя пĕлтерÿсем пулса тăраççĕ. «Шăпчăка юмахпа тăрантармаççĕ» тет вырăссен пословици, финн халăхне вара çавăн пек виçене пĕлмесĕр суйнипе пушшех те тăрантарма çук.

* * *

Караганда облаçĕнче отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа производствăра ĕçлеме хĕрарăмсемпе хĕрсенчен 3.000 çын ытла тăнă. Вĕсенчен 217 хĕрарăм тракторпа комбайн ĕçне, 130 хĕрарăм слесарь ĕçне, 30 хĕр врубовăй машинăсемпе ĕçлеме вĕренеççĕ, 42 хĕр запальщиксем пулма хатĕрленеççĕ. Çĕршер хĕрарăм ĕнтĕ малта пыракан профессисене вĕренсе алла илнĕ, вĕсем питех те паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Каунартски рудникре Мария Кудле, токарь ĕçне вĕренсе çитсе, кашни сменăрах 5-рен пуçласа 9 нормăна çити тултарса пырать.

### Январĕн 15-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Январĕн 15-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтăн чылай участокĕсенче пирĕн войскăсем активлă çапăçусем туса пынă.

* * *

Ефремов юлташăн боецĕсем (Хĕвеланăç фрончĕ) пĕр кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсенне 8 танк, 22 оруди, 68 пулемет, 8 автомашина тата боеприпассем тиенĕ 40 лав тытса илнĕ.

* * *

Воронович юлташăн подразделенийĕ, тавран çавăрăнса кайса, тăшманăн чакса пыракан чаçĕсен тылне пырса тухнă; вăйлă çапăçу пуçласа ярса, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Гордов юлташăн боецĕсем (Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕ) пĕр кун хушшинче тăшманăн 5 орудине, 2 минометне, 5 пулеметне тата боеприпассем тиенĕ 12 лавне пĕтерсе тăкнă. Противник пехотин 4 взводне вĕлерсе пĕтернĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче Подлас юлташăн чаçĕ, халăх пурăнакан пĕр пунктшăн çапăçнă чухне, 400 гитлеровеца стройран кăларнă тата нимĕçсен 100 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен атака тăвакан салтакĕсен пысăк ушкăнне сывăха пырса çитме май парса, пулеметчик Шевцов тăшмансем çине тăвăл пек вăйлăн пеме пуçланă, противникăн 30 салтакне персе вĕлернĕ.

* * *

Противникран тытса илнĕ документсем хушшинче «нимĕçсен 123-мĕш пехотнăй полкĕнчи 5-мĕш ротăн штрафсен журналне» тупнă. Журналта çырнисем тăрăх, ротăра дисциплинăна пăснăшăн айăпланман салтак пĕрре те çукки курăнать. Нумай салтаксене 5—6-шар взыскани панă. Журналăн 40 ытла страницине ÿсĕр пулса харкашнăшăн панă взысканисем çинчен çырса тултарнă. Стрелок Конрад Гюнтер, ефрейторсем Пауль Ваннеман, Вильгельм Мильде тата Пауль Нусс ÿсĕр чухне рота кухнине çĕмĕрсе тăкнă. Унтер-офицер Бруно Тюлле çар складĕнчен 2 килограмм çу вăрланă. Унтер-офицер Рихард Геренталлер хăйĕн тумтирĕсене сутса янă. Вилли Симон тата ытти стрелоксем хăйсемпе пĕрле пурăнакан салтаксен япалисене вăрланă.

* * *

Вилнĕ нимĕç ефрейторĕ Уттенлек çумĕнче тупнă çырура, киле яма ĕлкĕреймен скерĕнче, çапла çырнă: «Икĕ эрне каярах эпир поражени тÿсрĕмĕр, çавăнпа пирĕн чакмалла пулчĕ. Хĕçпăшалсемпе машинăсене эпир чылайĕшне пăрахса хăвартăмăр. Нумай мар юлташсем кăна хăйсен пурнăçне сыхласа хăварчĕç, вĕсем хăйсем çинче пулнă тумтирсемпе кăна тăрса юлчĕç. Эпĕ çакна ĕмĕр-ĕмĕрех асра тытăп».

* * *

Курск облаçĕнчи Пристански районри Плоское ялĕнче, халĕ гитлерла тискер кайăксенчен ирĕке кăларнăскерĕнче, пурăнакансем çапла каласа пăраççĕ: «Пирĕн яла пырса кĕнĕ хыççăн нимĕç бандичĕсем хресченсене тискеррĕн асаплантарчĕç. Пĕтĕм халăх курса тăнă çĕртех Петр Сергеевич Печереев çемьине бандитсем тискеррĕн асаплантарса вĕлерчĕç. Печереев арăмĕн Ольгăн аллинче кăкăр ачи пулнă. Офицер амăшне персе вĕлерчĕ, унăн ачине кинжалпа чиксе пăрахрĕ. Палачсем Печереевсен 5 çулти ывăлне те персе вĕлерчĕç. Федор, Григорий тата Дмитрий Леонидовсене, Данилов, Игорев тата ытти колхозниксене те нимĕç бандичĕсем вĕлерчĕç. Ялта темиçе сехет хушши пурăнса, гитлеровецсем 23 çынна вĕлерчĕç. Персе вĕлернĕ хыççăн массăллăн çаратма тытăнчĕç. Нимĕçсем мĕн пуррине йăлтах, çипсемпе спичкăсене те, илсе тухса кайрĕç. Вĕсем урампа иртсе пыракансене тытса чаратчĕç те, персе вĕлерессипе хăратса, вĕсен тумтирĕсене хывса илетчĕç. Яла çаратса пĕтернĕ хыççăн нимĕçсем ăна тивертсе ячĕç. 150 килтен 130 килĕ çунса кайрĕ. Красноармеецсен килсе çитнĕ чаçĕсем пире вилĕмрен çăлса хăварчĕç».

## Уйăхлăхăн 20 кунĕ хушшинче тунă ĕçсем

Комсомолăн республикăри колхозсенчи организацийĕсем ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене юсас тĕлĕшпе пыракан уйăхлăха хутшăнчĕç.

Январĕн 10-мĕш тĕлне ялхуçалăх машинисене тĕрĕслес ĕçе республикăри 913 колхозра вĕçленĕ. Нумай колхозсенче çав ĕçе тума çамрăксенчен ятарласа комиссисем е бригадăсем организациленĕ, вĕсене ВЛКСМ райком бюровĕсен, пленумĕсен членĕсем ертсе пыраççĕ.

Сĕнтĕр районĕнче райцентрти 24 комсомолец-активиста уйăхлăх пĕтиччене колхозсене пулăшса пыма уйрăм ялсоветсемпе колхозсем çумне çирĕплетнĕ. Вĕсем кашни канмалли кун ыран тенĕ чухне йĕлтĕрпе харпăрхăйне çирĕплетсе панă колхозсене кайса, ĕçре пулăшса хăвараççĕ.

Калинин районĕнче те активистсенчен 38 комсомолеца колхозсене пулăшма ялсене янă. Районра ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене тÿрлетес тĕлĕшпе 205 комсомолец ĕçлет.

Ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене юсас ĕçе Ишлей районĕнче 198 комсомолец, Шăхасан районĕнче 173 комсомолец хутшăннă.

21 районран пĕлтернĕ тăрăх, 20 кун хушшинче республикăри комсомолецсемпе çамрăксем 4.412 плуг, 2.480 сÿре, 538 сеялка, 597 сÿсмен-хăмăт юсанă. Кунсăр пуçне 939 плуг, 554 сÿре, 125 сеялка пуçтарса, йĕркелесе лартнă.

Шупашкар районĕнчи «1-ое Мая» колхозри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем 4 плуга юр айĕнчен чавса кăларнă, халĕ вĕсене юсаççĕ.

Елчĕк районĕнчи Дзержинский ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем (комсомол организацин секретарĕ Ананьев) ялхуçалăх машинисене пĕр çĕре пуçтарнă, 5 плугне юсанă. «Марс» колхозра (организаци секретарĕ Саверьянов) ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене юсас тĕлĕшпе ĕçлеме комсомолецсемпе çамрăксен бригадине организациленĕ.

Чкаловски МТС-ри комсомолецсем тракторсене юсас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Тракторсене юсанă çĕрте ĕçлекенсем пурте нормăсене ытлашшипех тултараççĕ. Табаков, Андреев комсомолецсем нормăна 150-шар процент тултарса ĕçлеççĕ.

Уйăхлăх пынă вăхăтра пысăк çитменлĕхсем те пурри палăрать. Шупашкар, Етĕрне, Канаш районĕсенчи хăшпĕр колхозсенче ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене юсас ĕçе халĕ те тытăнман. Çак ĕçе туса пырас тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксен бригадисене те сахал организациленĕ. Колхозсенче тимĕрç ĕçне вĕренме кружоксем организацилемен.

Çÿлте асăннă çитменлĕхсене комсомолăн кашни колхозри организацийĕ шута илмелле, вĕсене сиййĕнчех пĕтерес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемелле.

## НИМĔÇ САЛТАКĔСЕМ СОВЕТ ВОЙСКИСЕН АЛЛИНЕ ЫТЛАРАХ ТА ЫТЛАРАХ ТЫТКĂНА ПАРĂНАÇÇĔ

Совет командованийĕ сĕнсессĕн те, нимĕç салтакĕсем чылай чухне юлашки вăхăтченех тыткăна парăнма килĕшмен. Тыткăна парăнма килĕшменнине тыткăна лекнĕ нимĕçсем çапла ăнлантарса параççĕ: совет войскисен аллине тыткăна парăнакан салтаксене нимĕç офицерĕсем çурăмран пере-пере пăрахнă иккен. Çапах та, уйрăмах юлашки вăхăтсенче, хăйсен офицерĕсем персе пăрахассинчен те хăрамасăрах, нимĕç салтакĕсем ытларах та ытларах тыткăна парăна пуçларĕç. Çакăншăн пăшăрханса ÿкнĕ гитлеровецсем хăйсен черетлĕ провокацине тума васканă. Германи информаци бюровĕ январĕн 12-мĕшĕнче: большевиксем нимĕçсене тыткăна илмеççĕ, нимĕн хĕрхенмесĕр пĕтерсе тăкаççĕ, тесе пĕлтернĕ. Çак ирсĕр элекĕн тĕллевĕ уççăнах курăнса тăрать. Гитлерла суеçĕсем, çакăн пек юптарусемпе усă курса, нимĕн тĕллевсĕр вăрçăран совет войскисен аллине тыткăна парăнса çеç чĕррĕн тухассине шанакан нимĕç салтакĕсене хăратма тăрăшаççĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

## Нимĕç фашисчĕсен тискер ĕçĕсем çинчен кашни çыннăн пĕлсе тăмалла

Хаçатсенче пичетленнĕ документсенчен, нимĕç фашисчĕсен тыткăнĕнчен хăтăлса тухнă совет граждăнĕсем, çав тискерлĕхсене куçкĕретĕнех курнăскерсем, каласа панинчен, Совет Информаци Бюровĕ пĕлтернисенчен эпир пĕлетпĕр: бандит Гитлер ертсе пыракан нимĕç фашисчĕсен вăрă-хурахла çарĕсем хăйсем тытса илнĕ совет территорийĕсем çинче тискер кайăкла хăрушă ĕçсем тăваççĕ, халăх пурлăхне çаратса юхăнтараççĕ. Нимĕçсен вăрă-хурахла çарĕшĕн нимĕнле законлăх та çук. Нимĕç оккупанчĕсем — тискер кайăксем. Çав этем кĕлеткиллĕ тискер кайăксем этемлĕх нихăçан курман хăрушă ĕçсем тăваççĕ. Фашистсен юнлă йыттисем пĕчĕк ачасемпе ватă çынсене вĕлереççĕ, хĕрарăмсемпе хĕрачасенчен тискеррĕн мăшкăлласа, ним айăпсăр пере-пере вĕлереççĕ.

Юнлă Гитлерăн орди хăйĕн ирсĕр çулĕ çинче мĕн пуррине пĕтĕмпех ишĕлтерет, хуласемпе ялсене вут хыптарса çĕрпе танлаштарать. Нимĕçсен вăрă-хурахла салтакĕсемпе офицерĕсем мирлĕ халăхăн пурлăхне çаратаççĕ, вĕсен кил-çурчĕсене çунтара-çунтара яраççĕ. Фашистсен летчикĕсем санитари поезчĕсем çине бомбăсем пăрахаççĕ, аманнă çынсене, тыткăна лекесрен таракан çынсене самолетсем çинчен пулеметран пере-пере вĕлереççĕ. Фашистла пуçкасакансем тыткăна илнĕ тата аманнă красноармеецсемпе командирсене тискеррĕн асаплантарса вĕлереççĕ.

Этем сăн-сăпатне тахçанах çухатнăскерсем, Гитлерăн юнлă ирсĕрĕсем, пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар боецĕсем çине тÿррĕн наступлени тăваймаççĕ. Хăравçă чунлă йытăсем хĕрарăмсемпе пĕчĕк ачасене, персе вĕлерессипе хăратса, хăйсем умĕнче уттараççĕ; вĕсем хыçĕнче пырса, наступление каяççĕ.

Нимĕç çарĕн командованийĕ хушнă тăрăх хăйсем тытса илнĕ совет территорийĕсем çинче гитлеровецсем салтаксен аскăн çурчĕсене организациленĕ. Çав çуртсенче совет хĕрарăмĕсемпе хĕрачисенчен тискеррĕн мăшкăллаççĕ.

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Германи влаçĕсен ирсĕр ĕçĕсем çинчен пĕлтерсе çырнă нотăна вуланă чухне нимĕç оккупанчĕсен çавтери тискер ĕçĕсем çÿç-пуçа вирелле тăратаççĕ, чĕре çилĕпе, курайманлăхпа тулать. Нимĕç фашисчĕсен çак калама çук хăрушă та тискер ĕçĕсене пирĕн кашни рабочин, колхозникĕн, интеллигентăн пĕлсе тăмалла.

Парти организацийĕсем нимĕç фашисчĕсен тискер кайăкла ĕçĕсем çинчен калакан материалсене, фактсене, статьясене ĕçхалăх массисене тĕплĕнрех ăнлантарса пама пуçларĕç. Шупашкар хулинче ВКП(б) хула комитечĕн агитпункчĕ ку тĕлĕшпе лекцисем, докладсем, калаçусем нумай туса ирттернĕ. Партин çыхăну Управленийĕнчи пуçламĕш организацийĕн агитаторĕсем нимĕç фашисчĕсен тискер кайăкла ĕçĕсем çинчен ĕççыннисене тăтăшах вуласа, ăнлантарса параççĕ. Тĕслĕхрен, вĕсем «Гитлер совет хресченĕсене ĕç выльăхĕ тăвасшăн» статьяна, А. Толстой писателĕн «Халăх юнĕ» ятлă статьяна, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ «Советăн тыткăна лекнĕ çыннисем тĕлĕшпе Германи влаçĕсем тĕлĕнмелле тискер ĕçсем туни çинчен» панă нотăна тата ыттисене те вуласа ăнлантарса панă. Çакăн пек докладсемпе калаçусене ытти парторганизацисем те туса ирттернĕ. Шупашкар хулин агитпунктĕнче «Фашизм — этемлĕхĕн тискер тăшманĕ» темăпа фотовыставка организациленĕ. Çав выставкăна нимĕç фашисчĕсен тискер ĕçĕсене кăтартакан документсем — фотоÿкерчĕксем чылай пухнă. Агитпунктăн библиотеки нимĕç фашисчĕсен тискер ĕçĕсем çинчен калакан материалсемпе статьясене хаçатсенчен касса пухса папка тунă. Нумаях пулмасть агитпункт агитаторсемпе агитколлектив руководителĕсен семинарне туса ирттерчĕ. Ку семинарта «Нимĕç захватчикĕсем совет граждăнĕсене пусмăрланине тата вăрă-хурахла çаратнине хирĕç ответлесе, фронта пулăшас ĕçе вăйлатар» темăпа инструктивнăй доклад итленĕ.

Халĕ Шупашкарти предприятисемпе учрежденисенче агитаторсемпе беседчиксем Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ «Германи влаçĕсем хăйсем тытса илнĕ совет территорийĕсем çинче пур çĕрте те халăха çаратса юхăнтарни çинчен тата тискер кайăкла çавтери хăрушă ĕçсем туни çинчен» пĕлтерсе ССР Союзĕ дипломатиллĕ çыхăну тытакан çĕршывсен посолĕсемпе посланникĕсем патне янă нотăна вуласа ăнлантарса параççĕ.

Шупашкар хулинчи ĕççыннисем В. М. Молотов юлташ нотине радио тăрăх итленĕ, хаçатсем çинчен вуланă тата çав документа агитаторсемпе беседчиксем вуласа панă хыççăн пĕр çын пек хаяррăн: «Нимĕç оккупанчĕсене — вилĕм! Ирсĕр те юнлă ĕçсемшĕн — пуриншĕн те çынçиен гитлеровецсене туллин тавăратпăр. Вĕсем вĕлернĕ пĕр çынна та эпир манмăпăр! Пуриншĕн те вĕсен туллин ответ тытма лекет. Нимĕçсен урса кайнă йыткĕтĕвĕсене çĕр çинчен хăвартрах шăлса ыватма фронта татах та ытларах, татах та лайăхрах пулăшар!» теççĕ.

Парти организацийĕсем агитациллĕ ăнлантару ĕçне пур çĕрте те тивĕçлипе туса пымаççĕ-ха. Хăшпĕр çĕрте çак ĕçе кирлĕ пек хакламаççĕ. Агитаторсемпе пропагандистсен В. М. Молотов юлташăн нотине кашни совет гражданинĕ патне çитерме тăрăшмалла. Çав документа кашни ĕççынни пĕлтĕр, вулатăр, ăнлантăр. Нимĕç фашисчĕсен вăрă-хурахла планĕсене халăх умĕнче тăрă шыв çине кăларса пымалла. Ку тĕлĕшпе фашистла пуçкасакансем хăйсен ирсĕр шухăшĕсемпе ĕçĕсем çинчен хăйсемех сÿпĕлтетсе панă материалсемпе, хаçатсенче пичетленекенскерсемпе, туллин усă курас пулать.

Гитлерла çынçиенсен «çĕнĕ йĕрки»— ĕмĕрлĕх чуралăха, выçлăха пĕлтернине ĕççыннисене фактсемпе çирĕплетсе кăтартса парас пулать. Фашизм —этемлĕхĕн тискер тăшманĕ. Ĕççыннисен чĕрисенче фашизма хаяррăн курайманни хĕмленсе тăмалла. Çакна тума политикăллă агитацин пур майĕсемпе те усă курмалла. Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсем, фотодокументсем, хаçатсенче пичетленнĕ материалсем, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн нотисем халăх хушшинче анлăн сарăлма тивĕçлĕ.

Нимĕç фашисчĕсен тискер ĕçĕсем çинчен агитаторсемпе пропагандистсен каласа кăна памалла мар, тата нимĕç оккупанчĕсенчен çĕршыва хăвартрах тасатас тĕлĕшпе мĕн тума кирлине вĕрентмелле, ĕçе ертсе пымалла. Тăшмана çĕнтерме пирĕн хамăр вăйсене вуншар хут ÿстерсе тимлĕн ĕçлемелле. Большевикла пропагандăпа агитацин пĕтĕм вăйне оборона тĕреклĕхне хăпартнă çĕре, тăван çĕршыва хÿтĕленĕ çĕре хумалла.

Совет халăхĕ нимĕç оккупанчĕсен тискер ĕçĕсене нихăçан та манмĕ. Аттесен, аннесен, пиччесемпе аппасен, пĕчĕк ачасен айăпсăр тăкăннă юнĕ нимĕç оккупанчĕсене туллин тавăрса, çав ирсĕрсене пĕр çын юлмиччен пĕтерсе тăкма чĕнет. Нимĕç фашисчĕсене нимĕнле каçару та çук, пулмасть те.

В. ИГНАТЬЕВ.
ВКП(б) Чăваш Обкомĕн инструкторĕ.

## Разъездри воскресник

Иртнĕ кану кунĕнче райцентрта ĕçлекенсем Ишлей чугунçул разъездĕнче воскресник туса ирттерчĕç. Унта пурĕ 40 çын, вĕсенчен 11 комсомолка пулчĕç. Воскресникре чугунçул линийĕ çине тулса ларнă юра хырса тасатрĕç. Ĕçленĕшĕн тивекен укçана (пурĕ 160 тенкĕ ытла) «Комсомол Чувашии» бронепоезда тунă çĕре париĕç.

Кун пек воскресниксене комсомолецсен чи малтан пуçарса ертсе пымалла. Анчах, апла пулин те, Кирьянова, Серебрякова, Малыгина, Иванова комсомолкăсем ку ĕçрен пăрăнса юлчĕç. Çакă ĕнтĕ, паллах, хăшпĕр комсомолецсен дисциплина çуккине, вĕсем вăрçă вăхăтне туйманнине пĕлтерет.

З. М.

# Нимĕçсем аманнă 350 красноармееца çунтарса янă

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, январĕн 13-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Голубев генералăн войскисем нимĕç оккупанчĕсене ăнăçлăн хăваласа пыраççĕ тата пĕтере-пĕтере тăкаççĕ.

Тăшман, пирĕн çар чаçĕсем хĕснипе каялла чакса пырса, ялсене çĕмĕрсе тухать, çунтарса ярать, аманнă красноармеецсене, стариксене, хĕрарăмсене тата ачасене тÿсме çук тискеррĕн асаплантарать. Л. ялне нимĕçсем пĕр шалçа юлмиччен тенĕ пекех çунтарса янă. Ялта мĕнпурĕ те ишĕлнĕ пилĕк çурт кăна тăрса юлнă. Гитлерла вăрă-хурахсем çав ялти пĕр çурта Павлова колхозницăн пĕчĕк ачине питĕрсе лартнă та ăна чĕрĕллех çунтарса янă.

Пĕрремĕш пятилетка ячĕпе тăракан совхозра нимĕçсем сарайне аманнă 500 красноармееца яхăн хăваласа кĕртнĕ те ăна бензин сапса çунтарса янă. 350 ытла совет воинĕ калама çук нусăк асаппа асапланса вилнĕ, ыттисене Хĕрлĕ Çарăн пырса çитнĕ чаçĕсем вилĕмрен çăлса хăварнă. З. ялĕнче нимĕçсем вут çинче пирĕн воинсен пысăк ушкăнне çунтарса янă. Р. ялĕнче тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ икĕ красноармеецăн виллине тупнă. Нимĕç варварĕсем çав красноармеецсенчен пĕринне аллти тутине касса татнă, пичĕ çинче хĕрлĕ çăлтăр касса кăларнă.

Çынçиенсен аллинчен вилнĕ юлташсен виллисем патĕнче боецсемпе командирсем тата политработниксем нимĕç пусмăрçисене пĕр шеллемесĕр таварма тата вĕсене пурне те пĕр çын юлмиччен вĕлерсе пĕтерме тупа тăваççĕ.

# Захаркин генералăн чаçĕсем нимĕçсене вăйлăн аркатаççĕ

Захаркин генералăн чаçĕсем, тăшман хаярлансах хирĕç тăнине çĕмĕре-çĕмĕре тăкса, çаплах малалла наступлени туса пыраççĕ. Пирĕн войскăсем Хĕвеланăç енчелле куçса пыракан çул çинче фашистла салтаксемпе офицерсен çĕршер виллисем сапаланса выртаççĕ. Çул айккисенче нимĕçсен пилĕк тонналлă грузовикĕсем, çăмăл машинисем, артиллери орудийĕсем вăрăм ретсемпе черетленсе тăраççĕ, унтах — снаряд, мина, патрон тултарнă ещĕксем. Нимĕçсем пăрахса хăварнă çар пурлăхĕсене халĕ пурне те пухса йĕркелеççĕ, юсавлă тупăсем пулсан, вĕсене çав самантрах тăшман енчелле çавăраççĕ. Иртнĕ талăк хушшинче Захаркин юлташăн чаçĕсем халăх пурăнакан 11 пункта йышăнса илнĕ.

Çапăçусенче Н-ски гвардейски часть хăйне лайăх палăртать. Гвардеецсем противникăн вăйлăн çирĕплетсе лартнă темиçе пунктне йышăнса илнĕ. В. ялне парасшăн мар пулса, фашистсем питĕ хаяррăн çапăçнă, темиçе хутчен контратакăсем тунă. Пирĕн боецсем, пулеметсенчен тата автоматсенчен вăйлăн персе, противникăн контратака тăвакан ретĕсене çулса пăрахнă пекех пĕтере-пĕтере тăкнă. Çав ялсемшĕн пынă çапăçусенче фашистсем, вилнисемпе аманнисене пĕрле шутласан, 2000 çынна яхăн çухатнă. Çав шутра финн салтакĕсемпе офицерĕсем темиçе çĕр çын пулнă.

**Л. МИТНИЦКИЙ.**
**ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ.**

# Гитлерпа генералсем хушшинчи хирĕçÿ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 13-мĕш. (ТАСС). Гитлерпа Германи генералĕсем хушшинчи хирĕçÿ çавтери çивĕчленсе çитнĕ, халĕ ĕнтĕ ун çинчен Германири хаçатсем те пытарса тăма пултараймаççĕ. Ку хирĕçÿ çинчен вĕсем вăрçă пуçланнăранпа малтанхи хут çыраççĕ. Швецире тухса тăракан «Социалдемократен» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, нимĕç хаçачĕсем çак вăхăтра генералсене Гитлерпа пĕрле пулса ăна пăхăнса тăма пĕр пытарса тăмасăрах чĕнеççĕ. «Германи хаçачĕсем нимĕç генералĕсене, вĕсем пурте Гитлера пăхăнса пурăнма присяга пани çинчен астутарса, харпăрхăй кăмăлĕнчи сисĕм-туйăмсене манса хăварма сĕнеççĕ», тесе çырать Швеци хаçачĕн корреспонденчĕ. Германи хаçачĕсем нимĕçсен командованийĕнче пысăк улшăнусем пулнине палăртаççĕ. Анчах та çакăнпа пĕрлех çав улшăнусем пирки халĕ, унпа тăшманла пропаганда усă курма пултарас вăхăтра, çырма юраманни çинчен асăрхаттараççĕ. Çак хушăрах Германи хаçачĕсем нимĕçсене, верховнăй командованире улшăнусем туни генералсенчен кам та пулин Гитлера панă присягăна пăснине пĕлтермест, тесе лăплантарма тăрăшаççĕ.

Германи хаçачĕсем Гитлерпа Германи генералитечĕ хушшинчи хирĕçÿ çинчен пĕлтерни пирки Германи халăхĕ хушшинче тĕрлĕрен сăмах-юмахсем сараласçĕ.

## Германин Норвегири транспорчĕсене взрывсем туса сирпĕнтернĕ

ЛОНДОН, январĕн 12-мĕш. (ТАСС). «Дейли мейл» хаçатăн Нью-Йоркри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Норвеги патриочĕсем Осло, Берген, Тронхейм, Ставангер, Ондальснес тата Тормс порчĕсенче Германи войскисемпе тăракан транспортсене взрывсем туса сирпĕнтернĕ. Взрывсем пулнипе нимĕçсен темиçе çĕр салтакĕ пĕтнĕ. Ку взрывсем пурте пĕр вăхăтрах, январĕн 10-мĕшĕнче, тул çутăлас умĕн пулнă. Германие хирĕç çакăн пек хăюллă саботажсем тунипе урса кайнă нимĕçсем асăннă портсенче пуринче те вăрçă чухнехи пек йĕрке туса хунă. Взрывсем тăвас ĕçе Норвегие фашистла пусмăрçăсенчен хăтарассишĕн кĕрешекен политикăллă организацисен руководителĕсем тунă, теççĕ. Анчах вĕсенчен пĕрине те тытма пултарайман.

## Норвеги халăхĕ Германи влаçĕсен террорне хирĕç кĕрешет

ЛОНДОН, январĕн 14-мĕш. (ТАСС). Норвегин телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Ставангер хулинче час-часах пăлханусемех пуçланса кайнă. Çакăн пирки ку хулана нимĕçсем çĕнĕрен çар чаçĕсем илсе пынă. Норвеги правительстви Лондонри представителĕ çапла каласа панă: Ставангерти лару-тăру çавтери хĕрсе çитнĕ. Нумаях пулмасть Германи влаçĕсем норвежецсене асаплантарса вĕлерни çинчен пĕлтерни Норвеги патриочĕсене хытă хумхантарса янă. Ставангерта Германин çар влаçĕсем асаплантарса вĕлернĕ çынсен шучĕ нимĕçсен пĕлтерĕвĕнче кăтартнă чухлĕ çеç мар, тĕрĕссипе нумай ытларах пулни палăрнă.

Çавăнти хыпарсенчех пĕлнĕ тăрăх, юлашки эрнесенче Норвегире чылай вырăнтан çĕнĕрен нумай çынсене арестленĕ. Саботаж туни сисĕннĕ пек пулнă вырăнсенче Германи влаçĕсем производствăра ĕçлекен рабочисен пĕтĕм сменисене арестлесе хупнă. Сăмахран, Нордланд округĕнче нимĕçсен çар ĕçĕсене туса тăракан рабочисенчен 30 çынна арестлесе концентрациллĕ лагере янă. Нумаях пулмасть Морс округĕнче 50 çынна яхăн арестленĕ, вĕсем хушшинче почтăра ĕçлекенсем те пулнă. Фредрикстадра 12 çынна арестленĕ. Çак хушăрах ĕçлĕ вырăнта тăракан паллă çынсене те нумай тытса хупнă; Будари госпиталĕн аслă хирургне тата темиçе журналиста арестленĕ. Тронхеймра темиçе çынна тытса тĕрмене хупнă, вĕсен хушшинче хулари аслă хирург та лекнĕ.

Германи влаçĕсем хыттăн хĕснине пăхмасăрах, Норвеги рабочийĕсем хăйсен «Хуллен ĕçле, начар ĕçле» текен лозунгне пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Телеграф агентстви илнĕ хыпарсем пĕлтернĕ тăрăх, нумаях пулмасть Флекк-Фиорд çывăхĕнчи пысăк предприятире ĕçлекенсенчен 21 рабочие суд туса — кашнин çинех 200-шер крон штраф хунă тата тĕрмене хупмалла тунă. Вĕсене производствăри ĕçе юрнех ерипен тăваççĕ, тесе айăпланă.

## Квислинга вĕлерме тапăннă

СТОКГОЛЬМ, январĕн 13-мĕш. (ТАСС). Швеци хаçачĕ «Дагенс нюхетер» çапла пĕлтерет: Квислинг ĕнтĕ темиçе эрне хушши чирлесе выртăн çинчех выртать. Унăн ĕçĕсене халĕхи вăхăтра унăн «министрĕ» Хаглин туса тăрать. Норвегири хаçатсем «Квислинг йывăр ĕçсемпе ывăнса çитрĕ» тесе пĕлтереççĕ.

Вырăнти журналистсем хушшинче илнĕ хыпарсем тăрăх, иртнĕ кунсенче Квислинга вĕлерме тапăннă пулнă, çав вăхăтра вăл йывăр аманнă.

## Норвеги патриочĕсене хăратаççĕ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 11-мĕш. (ТАСС). Норвеги патриочĕсем, Англи войскисем Локса утравĕ çине десант антарнипе усă курса, вырăнти квислинговец-предательсене пĕтерсе тăкнишĕн квислинговецсен хаçачĕ «Триппхок» питĕ тарăхса çырать. Квислинг партийĕн членĕсем пурăнакан çуртсем çинче, — тесе хуйхăрать хаçат, — уйрăм паллăсем туса тухнă пулнă. Çакă ĕнтĕ пирĕн партин членĕсем çинчен каласа паракан çынсем пуррине пĕлтерет. Çакăн пек çынсем тĕлĕшпе чи хаяр мерăсем йышăнатпăр, тесе хăратать хаçат.

## Çурçĕр Ирланди хăйĕн оборонине вăйлатать

ЛОНДОН, январĕн 12-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Веллингтонран пĕлтернĕ тăрăх, Çурçĕр Ирланди хăйĕн çĕршывĕн оборонине вăйлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ ĕçсем тума пытăннă. Çарта пулма тивĕçлĕ 18 çултан пуçласа 46 çула çитичченхисене пурне те çара илеççĕ. Çар снабженин министрĕ çапла каланă: ĕç вăйĕ çитмен пирки обществăллă ĕçсене чакарса, рабочисене оборона ĕçĕсене хутшăнтарасси çинчен правительство тивĕçлĕ кăтартусем панă.

# Германи влаçĕсем Голланди халăхĕн ăшă тумтирĕсене çаратаççĕ

ЖЕНЕВА, январĕн 11-мĕш. (ТАСС). Германи оккупанчĕсен Голландире тухса тăракан «Дейтше цейтунг ин ден Нидерланден» хаçачĕ çапла пĕлтерет: Голланди фабрикантчĕсене, çавăн пекех пысăккăн е ваккăн суту-илÿ тăвакансене те, çăмран тата мамăклă тирсенчен тунă япаласене пурне те Германин Гаага хулинче вырнаçса тăракан «текстиль бюровне» пама хушнă. Кунсăр пуçне тата полици влаçĕсене Голланди çыннисен килĕнчи ăшă япаласене пурне те шута илме хушнă. Ăшă тумтирсене пытарса хăварнăшăн персе вĕлермелле тăвиччĕнех айăпламалла тунă.

## Германипе Италин Югославири войскисем урăх вырăнсене куçаççĕ

«Нью-Йорк таймс» хаçатăн Бернри корреспонденчĕ, Римран илнĕ хыпарсем тăрăх, юлашки вăхăтра Югославире Германипе Итали войскисем вырăнтан вырăна куçкалани çинчен пĕлтерет. Корреспондент каланă тăрăх, нумаях пулмасть Германия, Венгрия тата Болгария пĕр-пĕрин хушшинче уйрăм килĕшÿ тунă. Çав килĕшÿ тăрăх, Югославире тăракан нимĕçсем вырăнне Венгрипе Болгари войскисене улăштарса тăратмалла.

Çак ĕç çинчен пĕлекенсем каланă тăрăх, юлашки вăхăтра Грецине Турци тата Болгарипе Турци чиккисене Германи войскисем нумай пырса çитнĕ. Асăннă государствăсен чиккисене хальхи вăхăтра Югославирен куçарса пыракан Германи войскисемпе вăйлатмалла. (ТАСС).

## Нимĕç хаçачĕсем Швеци çине тапăнма пăрахмаççĕ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 11-мĕш. (ТАСС). Нимĕç хаçачĕсем Швеци çине тапăнма чарăнмаççĕ, вĕсем Швецири государственнăй деятельсене вăрçса çыраççĕ. Ку тĕлĕшпе нимĕçсем хăйсем йышăнса илнĕ государствăсенчи хаçатсемпе те усă кураççĕ. «Дейтше цейтунг ин Нордейропа» хаçат январĕн 6-мĕшĕнче «Лăпкă кăмăллăх» ятлă умстатья пичетлесе кăларнă. Ку статья Швеци государствин пуçĕнче тăракансене хăратса çапла калать: Швецири политика деятелĕсем таврара пулса пыракан событисенчен нимĕн те ăнланма пултараймарĕç, вĕсем Швецин малашнехи кунçулĕ çинчен шухăшласшăн мар, Швецин час-час тусĕсемшĕн вырăнти япаласене урăхлатма вăхăт çитни çинчен пĕлесшĕн те мар. Çапла, хăшпĕр нимĕç хаçачĕсем, шухăшĕсене пĕр пытармасăр, Швецири государство йĕркине урăхлатма, унта Германие итлесе тăракан фашистла правительство туса хума чĕнсе çыраççĕ.

## Сывлăшри çапăçусен эрнери итогĕ

ЛОНДОН, январĕн 12-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: январĕн 10-мĕшĕнче вĕçленнĕ эрне хушшинче противникăнне Çывăхри Хĕвелтухăçĕнче 47 бомбардировщик тата 7 истребитель, Англи çинче 1 бомбардировщик тата 1 истребитель, Европа çинче 2 истребитель, мĕнпурĕ 58 самолет персе антарнă. Инçетри Хĕвелтухăçĕнче Англин, Америкăн тата Голландин авиацийĕ противникăн 24 самолетне пĕтерсе тăкнă. Англи авиацийĕ Европа çинче 12 бомбардировщик, Çывăхри Хĕвелтухăçĕнче 12 самолет тата Инçетри Хĕвелтухăçĕнче 4 самолет çухатнă.

# Лăпкă океан çинчи вăрçă

### АМЕРИКА ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 14-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен çар министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: Лусон утравĕ çинче (Филиппин) юлашки 24 сехет хушшинче пĕтĕм фронт тăршшĕпех икĕ енчен те артиллери пĕр чарăнмасăр персе тăкнă. Америкăпа Филиппин батарейисем Япони артиллерине пусарса пынă. Америка артиллерийĕ тăшман танкĕсен колоннине, мотомеханизированнăй чаçĕсене тата пехотине сапаласа янă, японецсене йывăр çухатусем кÿнĕ. Америка артиллерийĕ тĕп персе противникăн 11 батарейине çĕмĕрсе тăкнă. Халĕ противник хăйĕн артиллерине фронтран каялла чакарса, унччен йышăнса тăнă позицисене илсе кайнă. Америкăпа Филиппин çарĕсен çухатăвĕсем пысăках мар. Япони авиацийĕ енчен пикировка тăвакан бомбардировщиксем кĕрешÿе хутшăнни палăрнă. Минданао тата Джоло утравĕсем çинчен илнĕ хыпарсем тăрăх, çав утравсем çинче японецсем хăйсен малти линири базисене тăваççĕ, çакăнтан вĕсем хăйсен Малайăри тата Голланди Индийĕнчи операцисене пулăшса тăрасшăн. Японин Борнео утравĕн çурçĕр-хĕвелтухăç çыранне десант антарма тăнă тинĕс çар вăйĕсене Америкăн вирĕ бомбардировщикĕ, Голланди Индийĕн сывлăш çарĕсемпе пĕрле пулса, атакăланă. Çапталăк начар тăнă пирки атака мĕнле результат панине пĕлме пулман. Çапах та çакă паллă: противникăн икĕ суднине пĕтерсе тăкнă. Америка самолечĕсем хăйсен базисене пĕр сиенсĕр таврăннă.

Ытти районсенче нимле операцисем пулни те палăрман.

### АНГЛИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 14-мĕш. (ТАСС). Англин Сингапурти командованийĕн коммюникинче çапла каланă: январĕн 12-мĕшпе 13-мĕш хушшинче çĕрле Англи бомбардировщикĕ чугунçул çинчи Сингор станцине (Таи çĕршывĕн кăнтăр пайĕнче) атакăланă. Станци çине вут хыптаракан бомбăсем тата вăйлăн çуралакан фугаснăй бомбăсем темиçе тонна пăрахнă. Бомбăсем чугунçул станцин çурчĕсем çывăхне ÿкнипе вăйлă взрывсем пулнине палăртнă. Тепĕр бомбардировщик тинĕс çыранĕнчи порт çине пырса тапăннă, бомбăсем пăрахнипе портра пушарсем пуçланса кайнă. Малайăн хĕвеланăç пайĕнче Англи войскисем хăйсен тылĕнчи малтан хатĕрлесе хунă позицисем енне чакса пыраççĕ. Ĕнер Япони авиацийĕ Тампиа тата Мурар хулисем çине вĕçсе пырса тапăннă, бомбăсем пăрахнипе чугунçул çинчи çуртйĕрсем ишĕлнĕ.

Англин Рангунри командованийĕн коммюникинче çапла кăтартса панă: Январĕн 13-мĕшĕнче ирхине Япони авиацийĕ Рангунран çурçĕр енчи аэродром çине пырса тапăннă, бомбăсем ÿкнипе çуртйĕр тавраш ишĕлни те, аманнисемпе вилнисем те пулман. Савос çывăхĕнче противникăн пĕр самолетне персе антарнă. Англи самолечĕсем Прачуаб-Кирикун пункчĕсене атакăланă. Раубурире бомбардировка вăхăтĕнче пĕр паровоза сирпĕнтерсе янă. Пирĕн самолетсем пурте пĕр сиенсĕр таврăннă. Англи авиацийĕ ĕнер кунĕпех противник территорийĕ çийĕпе разведкăллă вĕçевсем туса иртерчĕ.

Бирмăпа Таи хушшинчи чикĕре тăракан патрульсем Япони войскисене хирĕç çапăçăва кĕнĕ, çав çапăçура японецсене чылаях пысăк сиенсем кÿнĕ.

### ГОЛЛАНДИ ИНДИЙĔН ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 14-мĕш. (ТАСС). Голланди Индийĕн командованийĕн коммюникинче çапла каланă: Голланди Индийĕн бомбардировщикĕсем Торакан утравĕн районĕнче японецсен 11 транспортне атакăланă. Пăрахнă бомбăсем тĕл ÿкнине палăртнă. Японин транспорчĕсене ултă пысăк крейсер тата ултă торпеднăй катер сыхласа пынă.

### ЯПОНИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ТОКИО, январĕн 13-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе панă пĕлтерÿсем тăрăх, Япони флочĕ январĕн 13-мĕшĕнче Голланди Индийĕн минăсем лартса çÿрекен пĕр карапне путарнă. Путарнă карапăн водоизмещенийĕ 1.291 тонна шутланать. Çав карап Торакан утравĕ патĕнче минăсем лартасшăн пулнă. Япони войскисем Менадо хули çывăхĕнчи (Целебес утравĕ) пĕр аэродрома йышăнса илнĕ.

# Йĕлтĕрçĕсен кроссне хатĕрленеççĕ

ИШЛЕЙ. Профсоюз членĕсемпе комсомолецсен Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пулакан кроссне иртерме хатĕрленес ĕç районра анлăн саралса пырать.

Кросса хатĕрленсе иртерес тĕлĕшпе районра 7 çынтан оргкомитет тунă. Судьясен коллегине уйăрса çирĕплетнĕ. Кросa 10 вырăнта иртерме палăртнă. Вырăнсенчен пĕлтернĕ тăрăх, паянхи куна 314 çын медицина енĕпе тĕрĕслÿре пулнă. Кросса хатĕрленнĕ май районри çамрăксем хăйсен вăйĕпе килте 176 мăшăр йĕлтĕр тунă.

Йĕлтĕрçĕсен кроссне хатĕрленес ĕç уйрăмăнах Ишекре лайăх пырать. Вĕсен пурĕ 80 мăшăр йĕлтĕр пур, 10 мăшăрне çамрăксем килте хăйсем тунă. Кросa хутшăнакансенчен 180 çын медицина енĕпе тĕрĕслÿре пулнă. Кросс пынă вăхăтра та медицина пулăшăвĕ пулать. Халĕ вĕсем икĕ кунта пĕрре тренировкăсем туса иртереççĕ. Çак ĕçе вăтам шкулта физкультурăпа вĕрентекен Поляков юлташ ертсе пырать. Хатĕрленÿ ĕçĕ шкулти комсомол тата профсоюз организацийĕсенче аванрах пынине палăртмалла. Вăтам шкулта вĕренекенсем 2—3 хутчен йĕлтĕрлĕ походсем ăмăртусем туса иртернĕ. Çав вăхăтрах вĕсем ГТО значокĕн хĕллехи нормисене парас ĕçе те йĕркеленĕ.

Кросса хатĕрленес ĕç Тивĕшри кустра та начар мар пырать. Пĕтĕмпе унта 40 мăшăр йĕлтĕр, вĕсенчен 20 мăшăрне килте тунă. Кросс пулса иртмелли вырăне тупса хатĕрленĕ.

**З. МИТРОФАНОВА.**

## Хĕрлĕ Çар валли аш-какай

ИШЛЕЙ. Шурча ялсоветне кĕрекен «Самолет» колхоз членĕсем, Çĕрпÿ районĕнчи «Цивильстрой» колхоз чĕнĕвне ырласа, Хĕрлĕ Çар валли хăйсен хуçалăхĕнче выльăхсем самăртса параççĕ.

Колхоз председателĕ В. Тимофеев — пĕр сурăх, колхоз счетоводĕ П. Кузьмин—5 чăх, колхоз бригадирĕсем: И. Гордеев—5 чăх, А. Пикусова—пĕр чăх, П. Ердуков—пĕр кăркка, А. Андреева—пĕр кăвакал тата ытти колхозниксем те чăхсем çитĕнтерсе самăртма тытăнчĕç.

**Н. СУВОРОВ.**

## Колхозниксем государствăна тырă сутаççĕ

ЕЛЧĔК. Сталин юлташ фронта çĕршыв валли тырпул, аш-какай, промышленность валли чĕртавар ытларах та ытларах парса тăма чĕнсе каланине колхозниксемпе колхозницăсем яланах асра тытса тимлĕн пурнăçласа пыраççĕ. Вĕсем хăйсен ытлашши тыррисене государствăна кооператив урлă сутаççĕ.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем январĕн 1-мĕшĕнче пулса иртнĕ пухура хăйсен хуçалăхĕсен тупăшĕнчен государствăна кооператив урлă 400 пăт тĕштырă сутма йышăнчĕç. Ф. Скрипкин, Г. Зайцев тата А. Деомидов колхозниксем 6-шар пăт сутаççĕ. Кунсăр пуçне колхоз пĕрлешÿллĕ фондран государствăна 600 пăт сутать. «Марс» колхоз членĕсем, пурĕ 41 хуçалăх, 66 центнер тырă сутаççĕ. Вăл шутран колхоз председателĕ А. Гаязов 3,5 центнер, Г. Гемалетдинов 2,5 центнер, Б. Юсуповпа Закиров 2-шер центнер сутаççĕ. «Марс» колхоз хăйĕн обществăллă фондĕнчен государствăна 120 центнер сутать. Çавăн пекех Кушкăри «Ким» колхозри чи лайăх ĕçлекен колхозниксем, активистсем, пурĕ 15 хуçалăх, государствăна 25 центнер ытла тырă сутаççĕ. Кунти колхозниксем: П. Рыбкин 18 пăт, А. Мышкин 12 пăт, А. Баринов 12 пăт, Е. Мартынов 9 пăт, Е. Мышкин 9 пăт сутма пулнă.

Дзержинский ячĕпе тăракан колхоз членĕсем те государствăна тырпул сутас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Кунти 29 хуçалăх кооператив урлă государствăна 30 центнер сутать. И. Захаров 9 пăт, Т. Корниловпа А. Антонов колхозниксем 8-шар пăт сутаççĕ. «Красные Темяши» колхоз обществăллă фондран государствăна 40 центнер, колхозниксем, пурĕ 57 хуçалăх, 215 пăт тырă сутаççĕ. Вăл шутран колхозница Е. Павлова 7 пăт, колхозник А. Емельянов 8 пăт сутма пулнă.

«Осоавиахим», Ленин ячĕпе тăракан колхозсенче те государствăна кооператив урлă тырă сутасси ăнăçлă пулса пырать.

**И. ПЕТРОВ.**

# КУЛЛЕН КИРЛĔ ТАВАРСЕНЕ ЫТЛАРАХ ТУСА КĂЛАРАР

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви туса кăларассине ÿстермелли мероприятисем çинчен» постановлени йышăнни çул талăк иртрĕ.

Çак çулталăк хушшинче пирĕн республикăри вырăнти промышленноçпа промкооперацисем чылай пысăк çитĕнÿсем турĕç. Çĕнĕрен чылай предприятисем, мастерскойсем, цехсем, промартельсем организациленĕ. Вĕсенче халиччен туса кăларман продукцисем тума тытăннă. Шăмăршă, Çĕнтĕрвăрри тата ытти районсенче те промкомбинатсемпе артельсем, 1941 çулти плана срокченех тултарса, планран ытлашши темиçе çĕршер пин тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕç. Сăмахран, урапасем тумалли плана икĕ хут ытла тултарнă. Урапасем тăвас тата кивĕ урапасене юсас тĕлĕшпе Вырăнти промышленность халăх комиссариачĕн системине кĕрекен предприятисем уйрăмах пысăк çитĕнÿсем тунă.

Отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа вырăнти промышленноçпа промкооперации хăйсен ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетсе пычĕç. Вĕсем Хĕрлĕ Çар валли сахал мар атă-пушмак, кĕпе-тумтирсем, йĕлтĕр çунасем тата ытти япаласем те пайтах туса параççĕ.

Хĕрлĕ Çара кирлĕ продукцие туса кăларнипе пĕрлех, пирĕн халăх хуçалăхĕнче куллен кирлĕ таварсемпе продовольстви туса кăларас ĕç çине те ситлĕлĕклĕ çавăрăнса пăхмалла. Çавна тума пур условисем те пур.

Анчах çав условисемпе пур çĕрте те туллин усă курма вĕренмен-ха. Çавна пула 1941 çулти плана хăшпĕр предприятисем тултарайман. Тăмран савăт-сапа туса кăлармалли плана промышленность предприятийĕсемпе промкооперацисем çурри кăна пурнăçланă. Савăт-сапа тума юрăхлă тăм кашни районрах пур. Апла пулсан та ку ĕçе чылай районсенче организацилемен. Вăрнар, Первомайски, Советски тата ытти районсенче те çак енĕпе нимĕнех те туман. Советски районра тăм чÿлмексем тăвакан мастерской темиçе çул ĕçлет пулин те, ĕçе ситлĕлĕклĕ йĕркелемен.

Çавăн пекех хуçалăхра куллен кирлĕ япаласене йывăçран та тума пулать. Пирĕн республика йывăçран пуян. Вырăнти промышленноçпа промкооперации хуçалăхра кирлĕ япаласене йывăçран туса кăларас ĕçе йĕркелессишĕн начар кĕрешеççĕ. Çавна пула пирĕн хуçалăхра йывăç кашăк, каткапичке тата ытти япаласем те ситлĕлĕксĕр. 1941 çулта древпромсоюз хуçалăхра куллен кирлĕ япаласене туса кăларас плана тултарайман.

Халĕ, вăрçă вăхăтĕнче, чугунçул транспорчĕ фронта кирлĕ япаласене турттарнă пирки, куллен кирлĕ япаласене вырăнти чĕртавартан вырăнтах тума уйрăмах хытă тăрăшмалла. Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшал тума сахал мар тимĕр-тăмăр кирлĕ. Çавăнпа та хуçалăхра кирлĕ хăшпĕр япаласене йывăçран (валашка, витре, кашăк т. ыт. те) тума тăрăшмалла. Йывăçран тунă савăт-сапа тĕреклĕ, йÿнĕ пулать, апат-çимĕçе те пăсмасть.

Тимĕр-тăмăртан хуçалăхра куллен кирлĕ япаласем тăвас ĕç пирĕн республикăра кая юлса пырать. Мирлĕ вăхăтра çĕçĕ, хачă, вилка тата ытти япаласене те Горькийĕ, Мускав е тата урăх облаçсенчен турттарса килнĕ. Çак япаласене тăвакан производство пирĕн республикăра çукпа пĕрех. Анчах вăл япаласенчен нумайĕшне колхозсенчи тимĕрçĕсемех тума пултараççĕ. Вырăнти советсемпе суту-илÿ организацийĕсен пур условисемпе те усă курса, хуçалăхра куллен кирлĕ тимĕр-тăмăртан тăвакан япаласене май килнĕ таран вырăнтах туса кăларас ĕçе организацилемелле. Вырăнта çĕнĕ продукци туса кăларассипе пĕрлех, куллен кирлĕ япаласене юсас ĕçе те йĕркелемелле. Атă-пушмак, тумтир, урапа-çуна, примус тата ытти те юсакан мастерскойсем ситлĕлĕклĕ пулмалла.

Пирĕн республикăра ĕççынниcен апат-çимĕçне лайăхлатмалли майсем те сахал мар. Атăл, Сăрă, Çавал тата ытти çырма шывĕсенче те пайтах пулă пур. Пулă кÿллисемех республикăра 185 ытла шутланаççĕ. Çав пуянлăхпа пирĕн суту-илÿ организацийĕсемпе апат-çимĕç организацийĕсем йĕркеллĕ усă курма пĕлмеççĕ. 1941 çулта Рыботрест, Чувашсоюз, Чувашторг, Промсоюз, Столовойсемпе ресторансен тресчĕ пулă тытас плана тултарайман, мĕншĕн тесен вĕсем пĕри те пулă тытас ĕçе çирĕп дисциплинăпа организацилесе ертсе пыман.

Çавăн пекех вăрмансенче тĕрлĕрен çырла, кăмпа, мăйăр, колхозсенче тĕрлĕ çырла-çимĕçсем, пахча-çимĕçсем нумай. Çавсемпе пуринпе те туллин усă курма пĕлмелле. Уйрăмăнах кăçал сахăрлă чĕртаварсем ытларах тăвасси çине çавăрăнса пăхмалла. Çĕрулмирен, крахмалран патока тума пулать. Сахăр кăшманĕнчен сироп хатĕрлеççĕ; çавăнпа та çав продуктсене ытларах лартса тума тăрăшмалла.

Предприятисемпе суту-илÿ организацийĕсенче, столовăйсенче, спирт тата крахмал тăвакан заводсенче, армансенче выльăх-чĕрлĕх валли усăллă отходсем нумай пулаççĕ. Вĕсемпе пуринпе те туллин усă курмалла.

Вырăнти промышленноçпа промкооперации предприятийĕсенче ĕçлекенсенчен пĕр пайĕ фронта тухса кайрĕ. Вĕсен вырăнĕнче ĕçлекен çĕнĕ çынсене вĕçсе вăхăтлăх курссем урлă тата ытти майсемпе те вĕрентсе, кирлĕ квалификациллĕ кадрсене хатĕрлемелле. Ку ĕçе кулленех туса пымалла. Вырăнти промышленноçпа промкооперации ĕçне ытларах хĕрарăмсемпе хĕрсене явăçтармалла. Кăçалхи çул кая юлса пыракан пĕр предприяти те пулмалла мар. Вырăнти советсемпе парторганизацисен промышленность предприятийĕсене пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме кирлĕ условисем туса парассишĕн кĕрешмелле.

**Д. ДУБИНИН.**
**ВКП(б) Обкомĕн промышленность отделĕн заведующийĕ.**

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.


**О Б Ъ Я В Л Е Н И Е**

*Чебоксарскому ликероводочному заводу*

**Т Р Е Б У Ю Т С Я:**

бондари, опытный тракторист, механик для двигателя внутреннего сгорания, столяр, рабочие и работницы.

Оплата сдельная

С предложением обращаться: Чувашская улица, № 61, ликероводочный завод, к главному инженеру.


РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 8, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 8—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 8—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—38, дежурнăйăн — 8—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—8—23.

НТ 332 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 2, Ф 6. 58 84 п. з.